## ЮХМА МИШШИ - КОМЕДИ ĂСТИ

Драматурги - литературăн чи йывăр жанрĕ. Комеди çырасси вара - пушшех те çăмăл мар. Çавăнпа ĕнтĕ пирĕн драматургсем питĕ сахал комеди çыраççĕ. Çак тĕлĕшĕнчен пăхсассăн Юхма Мишшин драматургири пултарулăхĕ питĕ курăмлăн уйăрăлса тăрать. Вăл чăнласах та драматургири кулăш ăсти. Акă, çак «Арçынпа хĕрарăм» кĕнекене кĕнĕ пьесăсене, илсе пăхар-ха. Вĕсем ăста алăпа çырнă комедисем. Çав хушăрах вĕсем ним шухăша ямасăр ахăлтатса лармалли хайлавсем те мар. Юхма Мишши комедийĕсем кашни çынна култараççĕ те, аякран та пырса чышаççĕ, юлашкинчен вара тарăн шухăша яраççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ унăн Путĕш Патян çинчен çырнă "Çăтмаха лекесчĕ е Патян Лештĕнчере" камитне Мускавра та лартнă, ăна тĕрлĕ çĕршывсенче те кăтартнă.

Патян - пирĕн халăх сăмахлăхĕнчи паллă сăнар. Акă, çак комедире вăл, арăмĕ аптратса ситерниле, хăй ирĕкĕпе Лештĕнчене лекет. Анчах мĕнле-ха унта пурнăç? Çĕр çинчи пекех-и е урăхларах-и? Сиелген пахма, паллах, урăхларах пек. Анчах тĕплĕнрех пăхсассăн унта та пурнăç çĕр çинчи пекех иккен. Пĕрисем ĕçлеççĕ, теприсем иртĕхсе пурăнаççĕ. Тĕрĕслĕхе юратма вĕреннĕ Патяншăн ку вăл, паллах, чăтма

çук тĕрĕсмарлăх. Çавăнпа ĕнтĕ вăл пур çĕрте те, тамăкра та, çăтмахра та, турăсен тĕнчинче те хăйне май йĕрке тума, тĕрĕслĕх тупма тăрăшать.

Юхма Мишши хăй çак пьесăна çырни пирки каласа пани питĕ кăсăк. "Ку пьесăна эпĕ пĕтĕмпех çав вăхăтри пурнăçа тĕпе хурса çырнă. Çўлтисен тĕнчи вăл çав вăхăтри пирĕн парти обкомĕ. Çўлтисем - унта ĕçлекенсем. Столовăйсем те обком хушнипе тунисем... Çăтмахне çырнă чухне вара эпĕ партин хупă кану çурчĕсемпе санаторийĕсене карикатурлă-рах кăтартас тенĕччĕ..."

Ку сăмахсене Юхма Мишши хăй пьесине Мускаври "Гротеск" театр лартнă хыççăн каланăччĕ. Çак статьяна çырнă чухне вара Чăваш халăх писателĕ мана çапла каларĕ: "Çĕнйĕркелў самани пуçлансассăн эпĕ пурнăç урăхланать пуль тенĕччĕ, КПСС туса хунă путсĕрлĕхсем, танмарлăхсем, тис-керлĕхсем пĕтĕç тенĕччĕ. Анчах пач! урăхла пулса тухрĕ. Хальхи путсĕр чунлă, бандит-"демократсен" самани КПСС туса хунă саманаран пин хут та тискертерех. Эпир тăрăшни, эпир критиклесе е кулса пĕтерме тăрăшнă çитменлĕхсем вырă-нне урăххисем, тата та ытларах тискеррисем çиеле тухрĕç..."

Юхма Мишшин Патян çинчен çырнă малтанхи комедийĕ "Эх, тĕлĕнтермĕш мыскара е Патян тĕнче касать" ятлă. Унта та эпир çак Патянах куратпăр. Арăмне тарăхнипе вăл тĕнче касма тухса каять те тем тĕрлĕ мыскара та курать, анчах пĕр самантлăха та тĕрĕслĕхпе чăнлăхшăн кĕрешмеллине манмасть. Çак енчен пăхсассăн, Патян вăл пирĕн, чăвашсен, хăйне евĕрлĕ Дон-Кихочĕ те, Ходжа Насреддинĕ те.

Сервантесăн Дон-Кихочĕ те пирĕн Патян пекех чăнлăхшăн тăрăшать, чăнлăхшăн кĕрешет. Анчах унăн тăрăшăвĕ, кĕрешĕвĕ чылай чухне пустуй пулать. Патянăн та тăрăшăвĕ, кĕрешĕвĕ çаплах, анчах ăна çакă та antратса çитерейместь, çавăнпа вăл юлашкинчен усалсемпе чăнлăха хирĕç пыракансене çĕнте-рет-çĕнтеретех.

Ходжа Насреддин та, пирĕн Патян пекех, тĕрĕслĕхшĕн, чăнлăхшăн тăрăшать, инкеке лекнисене пулăшма тăрăшать. Çакна пула тем тĕрлĕ инкеке лекет, асапланать, çапах та юлашкинчен унăн кĕрешĕвĕ çĕнтерўпех вĕçленет. Çавăнпа ĕнтĕ эпĕ вĕсене пĕр пек пăхаллăскерсем тетĕп.

Ку тĕлĕшĕнчен "Арçынпа хĕрарăм" та, "Тĕнчере - тĕрлĕрен

кěнчеле" те малтанхи комедисене çырăх. Тем тěрлě мыскара та, тем тěрлě инкек те тÿсеççě çав хайлавсенчи тěп геройсем, çапах та юлашкинчен, Патян çинчен çырнă хайлавсенчи пекех, вěсем усалсене е тěрлěрен ăпăр-тапăрсене, кирлě-кирлěмарсене çěнтереççě; лайăххи, ырри вара çиеле тухать.

"Тěнчере тěрлěрен кěнчеле" пьеса маншăн уйрăмах хаклă, - каласа кăтартрě Юхма Мишши. - Киремет таса чун-чěрепе çынсене пулăшасшăн, анчах вěсем турра мар, усала итлеççě. Пурнăçра та час-часах çапла пулать. Çынсем таса чун-чěреллине мар, пакăлтисене, пуш параппансене, ним тума пěлмесěр сăмах пама юратакансене итлеççě. Хальхи пурнăçра уйрăмах çакна час-час курма пулать. Президентсене е депутатсене кама суйлани пирки шухăшласан ах пурте çакă тěрěс иккенне куратпăр".

Мěн калас тен, халăх писателěн сăмахěсем тěрěсех çав.

"Эй-эх, юрату" вара вăл пěр-пěр оперета валли çырнă хайлав пек. Унта та, паллах, малтанхи комедисенчи туртăмсем пур, çапах та вăл çак кěпекери ытти хайлавсенчен кăшт уйрăларах та тăрать пек. Вăл хавасл̆ă та илемлě, музыкăлла спектакль е хитре оперета пулмалли хайлав. Шел, пирěн театрсем лартман çав ăна.

Юлашкинчен пěтěмлетсе тата çакна каласшăн: Юхма Мишши комедийěсенче характерсен кěрешěвě вăйлă аталанса пырать, вěсенче калаçу сахал, вěсенче ěç туни (действие) нумай. Комедисенчи характерсем те ěç тунине пула аталанса е улшăнса пыраççě. Çакă вара вăл драматургири чăн-чăн ăсталăх. Çавăнпа ěнтě эпě хамăн çакă кěске хайлавăмра Юхма Мишшине чăнласах та комеди ăсти тесе чыслатăп.

1998.